«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ»

# Пурнăçне ачасене халаллană

**Сăн ӳкерчĕкре** Катькас территори пайĕнчи Шомикри хисеплĕ мăшăра – Вера Петровнăпа Семен Васильевич Ильмендеровсене – куратăр. Вĕсем çине пăхма питех те кăмăллă, сăн-питре ăшă туйăм палăрчĕ. Эпĕ ку мăшăра сывăх пĕлместĕп пулин те, шкулта ĕçленĕ çынсем мар-ши тесе шухăшларăм.

Ытлах йăнăшман иккен эпĕ. Çемье вучахне упракан Вера Петровна кĕçĕн класс ачисене вĕрентнĕ. Ку çулхи ачасемпе вара çепĕç те астармăш пулмасан майĕ çук. Иккĕмĕш анне – учитель – вĕсене хăйĕн ачине юратнă пек хавхалантарса вĕрентсе пырать. Хăшĕ-пĕрин тен парта хушшинче ларма та чăтăмлăхĕ çитмен, тепри вара алла ручка тытма хăнăхайман – пурне те вĕрентмелле учителĕн.

Ку ĕçсем, паллах, халĕ урăхларах пулса пыраççĕ, шкула каяс ачапа ача садĕнче тĕллевлĕ ĕçлесе пыраççĕ. Вера Петровна вĕрентнĕ вăхăтра тин кăна шкула пынă ачапа шăпах та пуçламăш класс учителĕ тачă ĕçленĕ. Çавăнпа та халĕ специалистсем ачана ача садне çӳретме сĕнеççĕ.

Семен Васильевич та хăйне майлă вĕрентекен пулнă тесен йăнăш мар. Вăл пионер лагерьне ертсе пынă. Лагерь вăл, паллах, ачашăн чи савăнăçлă вырăнсенчен пĕри. Унта – çĕнĕ тус-юлташ, вăйă-кулă, савăнăç, тĕрлĕ мероприяти тата ытти те. Семен Васильевич лагерьте ĕçленĕ май ача-пăча канăвне йĕркелесси, сывлăхне çирĕплетесси çине пысăк тимлĕх уйăрнă. Ман куç умне эпĕ Шомикри «Ромашка» лагерьте пулнă, ăна уçнă вăхăт, унти кану тухрĕ.

Апла пулсан мăшăр ĕç ĕмĕрне ача-пăчапа ĕçлесе иртернĕ тесе çирĕплетсех калама пулать. Çавăнпа та вĕсем ача-пăчапа пĕр чĕлхе çăмăллăнах тупма пултараççĕ, сăн-питрен те çутă.

Вера Петровнăпа Семен Васильевич Ильмендеровсем пурнăç çулĕпе пĕрле утма пуçланăранпа кăçалхи майăн 7-мĕшĕнче 55 çул çитрĕ. Шăпах çуркуннехи илемлĕ вăхăтра – çĕмĕрт çеçкене ларнă тапхăрта – вĕсем пурнăç çулĕпе пĕрне-пĕри килĕштерсе, пĕр тĕллевпе утма сăмах панă. Мăшăр хĕрпе ывăл ӳстерсе пурнăç çулĕ çине тăратнă. Вĕсене халĕ тăватă мăнук савăнтарать.



# Ача чухнехи ĕмĕчĕ пурнăçланнă



Эпĕ Васкассинчи Лариса Нестеровна Ильинана **(сăн ӳкерчĕкре)** мĕн ачаранпах пĕлетĕп. Маншăн вăл – ырă тĕслĕхри çын. Эпĕ Сосновка шкулĕнче вĕреннĕ чухне ăна учительсем пирĕн ума тĕслĕхе лартатчĕç. Вăл хăй вăхăтĕнче Чуманкасси шкулĕнчен ылтăн медальпе вĕренсе тухнă. Халĕ вăл тивĕçлĕ канури педагог.

Турри Лариса Нестеровнăна паха енсене пилленĕ. Унпа калаçсан темле кичем вăхăтра та кăмăл çĕкленет, ырă сĕнĕвĕ ялан вырăнлă. Сцена çине юрлама тухсан кам кăна ăмсанса пăхмасть пулĕ ăна, уçă та илемлĕ сасси ян каять. Вăл халĕ те тĕрлĕ концерт программине, мероприятисене активлă хутшăнать. Çакна та асăнса хăварас килет, ахаль утнă чухне те юрласа çӳрет е савăнмалли пулать е хуйхă-суйхă килсе тухать, чунне юрласа уçать. Эпĕ юнашар ялта пурăннăран çакна та аса илтĕм. Пĕр çулхине эпĕ Исетеркке яленчен тухрăм. Вăл, спорт тумĕ тăхăннăскер тата çăмăл кĕлеткеллĕскер, хăйĕн ĕçĕпе пирĕн ял еннелле çăмăллăн чупать, ку енĕпе те çивĕч вăл.

Лариса Нестеровна Шарпаш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вĕренӳре яланах малта пынăскер шкултан тухнă хыççăн И. Ульянов ячĕллĕ патшалăх университетĕнчи математика факультетне вĕренме кĕнĕ. Кунта та вăл пултаруллисенчен пĕри пулнă, обществăлла ĕçре хастарлăхпа палăрнă. Пилĕк çула тăсăлнă студент пурнăçне вăл ырăпа аса илет.

– Асран тухмаççĕ вăл çулсем. Мĕн ачаранпах учитель ĕмĕчĕпе пурăннăран хăвăртрах вĕренсе пĕтерсе шкула ĕçлеме каяс килетчĕ. Вĕрентекен профессипе чи малтан университетра 5-мĕш курсра вĕреннĕ чухне паллашрăм. Кĕркунне пире 1-мĕш номерлĕ шкула практикăна илсе кайнăччĕ. Малтанах уроксем итлерĕмĕр. Кайран вара хамăр уроксем ирттерме пуçларăмăр. Астăватăп-ха пĕремĕш урок мĕнле иртнине. Урока пĕтĕм чуна парса хатĕрлентĕм, куç умĕнче ачасем алă çĕклени, хаваслансах ыйтусем çине хуравлани курăнчĕ...

Акă урока шăнкăрав пачĕç, класа кĕретĕп, ачасене сывлăх сунатăп та урок пуçлатăп. Пĕринчен ыйтатăп, тепринчен, виççĕмĕшĕнчен... Никам та урока хатĕр мар иккен. Манăн алă усăнчĕ, кăмăл хуçăлчĕ. Çĕнĕ тема вĕрентетĕп. Аранах шăнкăрав янăраса кайрĕ. Ачасемпе сывпуллашса класран тухса утрăм. Çапла паллашрăм хамăн практика вăхăтĕнчи класпа. Акă юлашки тĕл пулу – практика вĕçĕнчи урок. Пурте урока хатĕр, пурте алă çĕклеççĕ, пурте хитре хуравлаççĕ. Урок вĕçĕнче вара кашниех хăй çырнă çырупне парать, унта хăйĕн шухăшĕ, ĕмĕчĕ, мана ырă сунса сăвăсем те çырнă.

Пилĕк çул сисĕнмесĕр иртсе кайрĕ. Çамрăк учительсем пулса тухрăмăр. Хăш шкула ĕçлеме каясси шухăшлаттарнах ĕнтĕ. Алла диплом илсен пĕр аудиторинче кам ăçта ĕçлеме каяссине палăртма пухăннăччĕ. Муркаш районне асăнчĕç те эпĕ пĕр шухăшласа тăмасăр алă çĕклерĕм. Шупашкар хулинче юлма та майсем пурччĕ. Çапла ача чухнех вĕрентекен пулас ĕмĕт сывăхарах та çывăхарах пулнишĕн питĕ савăнтăм.

1974 çулхи çурла уйăхĕн 15-мĕшĕ. Хĕвеллĕ ир. Чăваш патшалăх университечĕ панă диплома, Муркаш районĕн вĕрентӳ пайĕ панă хушăва тата паспорта илтĕм те Сосновкăри 8 çул вĕренмелли шкула тухса килтĕм. Çак ял пуçĕнче вырнаçнă шкул патнелле çитсе пыратăп. Тепĕр енчен пĕр хĕрарăм утса çитрĕ, чарăнса тăрса мана кĕтсе илчĕ. Пĕр-пĕрне сывлăх сунса паллашрăмăр. Вăл шкул директорĕн çумĕ Тамара Ипатьева пулчĕ. Манпа кăмăллăн калаçса шкул директорĕ патне илсе кайрĕ. Сĕтел хушшинче ларакан çӳллĕ те патвар кĕлеткеллĕ вăтам çулсенчи арçын Георгий Платонов директор сывлăх сунчĕ те ларма сĕнчĕ. Майĕпен çĕнĕ коллектива хăнăхса пытăм. Пĕлменнине ыйтаттăмччĕ, ĕçри аслă юлташсем яланах пулăшса пычĕç, тавах вĕсене уншăн. Шел, вĕсем пирĕнтен пĕрин хыççăн тепри уйрăлса кайрĕç. Ырă сĕнĕвĕсем асрах, – каласа парать тивĕçлĕ канури педагог Лариса Нестеровна.

Çапла пуçланнă учитель пурнăçĕ. Часах çамрăк вĕрентекен Ильина хушамат йышăннă. Ĕç ăсталăхĕ те ӳссе пынă, çулсерен çĕнĕрен те çĕнĕ ачана математика наукин кăткăс тĕнчине туртнă. Çавăн пекех вăл ӳкерме те ăста пулнă, ачасене те хаваспах çак ăсталăха панă. Хăйне шанса панă класс ачисемпе вара вăл чунне уçнă тесен те юрать. Хăй мĕн пĕлнине йăлтах вĕсене пама тăрăшнă. Юрă-ташă, спорт енĕпе те унăн ăсталăхĕ çителĕклĕ пулнă.

– Эпĕ шкулта вĕреннĕ чухне чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Нина Сергеевна пирĕн класс ертӳçиччĕ. Ăна эпир юрататтăмăр. Маншăн вăл шкулти чи лайăх вĕрентекенччĕ. Унăн урокĕсене чунтан хаваслансах вĕренсе каяттăм. Ăна итленипе, унпа калаçнипе манăн вĕрентекен пулас шухăш çуралчĕ. Эпĕ ун чухне улттăмĕш класраччĕ. Вăл пире мĕн шкултан вĕренсе тухиччен вĕрентнĕ пулсан, эпĕ те чăваш чĕлхипе вĕрентекен пулăттăмччĕ пулĕ. Анчах та вăл пирĕнтен ир уйрăлса кайрĕ. Ман асăмра унăн çутă сăнарĕпе янăравлă сасси анчах тăрса юлчĕ. Математикăпа вĕрентекен Тамара Николаевна мана çак предмета юратма вĕрентрĕ, малалла та ку енĕпе каймаа сĕнчĕ, – тăсрĕ вăл хăйĕн шухăшне.

Сосновка шкулĕнче çавăн пекех Лариса Нестеровна ачасене тăван ен культурине, ӳнер ăсталăхне вĕрентрĕ. Ачасемпе тĕрлĕ конкурса хутшăнса малти вырăнсене йышăнчĕç. Уроксем ирттернипе кăна ĕç кунĕ вĕçленмест, тĕрлĕ мероприятие хатĕрленчĕ, тĕрлĕ курав йĕркелерĕ вăл ачасемпе. Унсăр пуçне обществăлла ĕçсене, наукăпа практика конференцийĕсене хутшăнчĕ.

– Тав хучĕпе Хисеп грамоти те нумай, çапах та чи хакли – хам вĕрентнĕ ачасем сума суни, юратни, çулсем иртсен те манса кайманни. Нумайăшĕ уявсем ячĕпе салам ярать, çуралнă куна килеççĕ, тĕл пулусене чĕнеççĕ. Машинăпа лартса каяççĕ те кайран леççе хăвараççĕ. Темиçе çул каярах автобуссем сайра çӳретчĕç. Эпĕ 6 – 7 çухрăмри хам çуралнă яла çуран çӳреттĕмччĕ. Ман вĕрекенсем çул çинче эпĕ алă çĕклемесĕрех машинăпа лартса каятчĕç. Хам канлĕ ларса килни мар, мана хисеп туни савăнтаратчĕ, – терĕ вăл.

Ĕçне кура – хисепĕ. Пурне пулмасан та, хăш-пĕр чыслава асăнса хăварам. 1985 çулта пултаруллă педагог Раççей Федерацийĕн Вĕренӳ министерствин Хисеп грамотине тивĕçрĕ. 1997 çулта ăна Чăваш Республикин хĕрарăмсен канашĕн Хисеп грамотипе чысларĕç.

Çав çулсенче шкулта математика предметне вĕрентнĕ Зинаида Антонова ĕçтешĕ пирки ырăпа аса илет. Вăл вăхăтра Лариса Нестеровна çав шкулта пилĕк çул ĕçлеме ĕлкĕрнĕ пулнă.

– Лариса Нестеровна ĕçре пысăк ăсталăх пухма ĕлкĕрнĕччĕ. Вăл шкулти физика, математика, хими предмечĕсен пĕрлешӳвне ертсе пыратчĕ, чылай çул вăл çак тивĕçе пурнăçларĕ. Хăй аслă учитель пулнине ĕçпе çирĕплетсе пачĕ. Уроксене итленĕ хыççăн кирлĕ сĕнӳсемпе пулăшса пычĕ. Маншăн вăл наставник кăна мар, çывăх юлташ та, тăван аппа та пулса тăчĕ. Мăнна хурасси йăлара çукчĕ унăн, – аса илет Зинаида Андреевна.

– Кунран-кун, çул хыççăн çул сисĕнмесĕрех иртсе пырать. Анчах пек эпир, Сосновка шкулĕн вĕрентекенĕсем, пурте пĕрле шăнкăрав сассипе ачасене пĕлӳ тĕнчине хаваслăн ертсе пыратăмăрччĕ. Хамăр тăрăхри çамрăк ăрăва тарăн пĕлӳ парассишĕн тăрăшаттăмăрччĕ, ырă шухăшпа хавхаланса методика меслечĕсемпе усă курса вăй хураттăмăрччĕ.

Пултаруллă çын çинчен калаçнă чухне «Турă панă ăсталăх пур» теççĕ. Ку сăмахсене Лариса Нестеровна пирки калăн туйăнать. Вăл пур енлĕ пултаруллă та тăрăшуллă çын, математика, ӳнерпе чăваш культури, музыка вăрттăнлăхне, ăсталăхне ачасен чун-чĕри патне çитерессишĕн нумай тăрăшрĕ. Вăл вĕрентнĕ ачасем «математика урокĕ – чи юратниччĕ» тенине халĕ те илтме пулать. Лариса Нестеровна тивĕçлĕ канура, апла пулин те ăна çамрăк ăру хисеплет.

Пултаруллă çын пур енĕпе те хастар. Вăл Васкассинчи Культура çуртĕ çумĕнчи ал ĕç кружокне кăмăлласах çӳрет. Вырăнти хĕрарăмсене чăваш тĕррин вăрттăнлăхне вĕрентет. Тайма пуç сире, Лариса Нестеровна, эсир пирĕн çумра пулни – пирĕншĕн пысăк парне, – çапла пĕлтерет хăйĕн шухăшне ĕçтешĕ Светлана Максимова.

Ветеран педагог калана тăрăх, пурнăç ăна самай тĕрĕсленĕ, çапах та йывăрлăхне вăл чăтса иртернĕ. Ăна ĕç вăй-хăват парса тăнă. «Телей – юратнă ĕç, йывăрлăхсене чăтса иртерме пултарни», – тет. Халĕ вăл пысăк тĕллевпе пурăнать, мăнукĕ халăха кирлĕ, çĕршыва усăллă çын пултăрччĕ, ашшĕ-амăшне хăйĕн çитĕнĕвĕпе савăнтартăрччĕ тесе ĕмĕтленет.

Эпĕ Лариса Нестеровнăна çирĕп сывлăх, хавхалануллă кун-çул, ăнăçу сунатăп.

**(Малалли 5-мĕш страницăра).**

«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ»

# «Эпĕ ачасемшĕн ĕçлетĕп»

Çапла пĕлтерет хăйĕн шухăшне «Путене» ача сачĕн логопед учителĕ Елена Михайлова. Вăл каланă тăрăх, логопед ĕçĕнче 15 çул ытла тăрăшать. Эпĕ унпа кĕске калаçу иртертĕм.

– Педагогикăри ĕçе Çатракассинчи шкулта пуçларăм. Çав çулсене эпĕ халĕ те ырăпа кăна асăнатăп. Эпĕ унта педагогика колледжĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн 1999 çулта ĕçлеме кайрăм. Паллах, эпĕ ун чухне çамрăк пулнă, ĕç опычĕ пулман. Енчен те вăл вăхăтри шкул ертӳçи Петр Скворцов ĕçре мана пулăшса пыман пулсан манăн пурнăç малашне епле пуласси пĕлместĕп те. Петр Алексеевич тата унти коллектив мана кăмăлласах йышăннăн туйăнчĕ. Эпĕ вĕсене мана ĕçе хăнăхтарнăшăн тав тăватăп.

Тĕрĕссипе, малтанхи вăхăтсенче ĕçе тытăннă чухне хăрамалла пек те туйăнатчĕ, мĕнле тата мĕнрен ĕçлеме пуçламаллине пĕлместĕп. Куç хăрать те ал тăвать, теççĕ халăхра. Çапла пилĕк çул ытла ĕçлерĕм çав шкулта. Вăхăчĕ самай иртрĕ пулин те, унти ĕçтешсемпе халĕ те хутшăнатпăр, калаçатпăр, пухусене те хутшăнатăп. Унта ĕçлени ырă йĕр хăварчĕ. Пурнăçра тĕрлĕрен пулать, эпĕ хама пĕр вăхăт суту ĕçĕнче те тĕрĕслесе пăхрăм. Логопед ĕçне каялла таврăнасси пирки вара яланах ĕмĕтленнĕ. Ун чухне эпĕ «Лореаль» компанин республикăри представителĕ пултăм. Шупашкар хулинче сакăр çул ĕçленĕ хыççăн тăван тăрăха таврăнтăм.

Хамăн профессишĕн тунсăхласа çитсе 2013 çулта эпĕ каллех логопед ĕçне кӳлĕнтĕм, «Путене» ача садне ĕçлеме вырнаçрăм. Чăнах та çак ĕç мана питĕ кирлĕ пулнă. Эпĕ «Учитель-логопед» специальноçпа вĕренӳ институтĕнче професси пĕлĕвне ӳстертĕм.

Виçĕ çул каялла хамăн «Говорундия» логопед пӳлĕмне уçрăм. Ман пата çӳрекен нумай. Унта эпĕ хамăр тăрăхри ачасемпе кăна мар, кӳршĕ тăрăхсенчи ачасемпе те ĕçлетĕп. Ман патра йышăнура çавăн пекех Муркаша çуллахи вăхăтра аякран килсе пурăнакансем Якутинчен, Мускавран, тĕрĕсрех каласан, Раççейĕн чылай кĕтесĕнчен пулаççĕ.

Манăн тăрăшулăха пысăка хурса хаклани, хисеплени мана савăнтарать. Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн, вĕренӳ пайĕн Тав çырăвĕпе, Хисеп грамотипе чысларĕç мана.

2023 çулта республикăри «Лучший учитель-дефектолог» конкурса хутшăнса Чăваш Енти чи лайăх пилĕк логопед шутне кĕтĕм. «Кам малалла каймасть, хыçалалла каять, пĕр вырăнта тăракан положени çук», ку – манăн девиз. Эпĕ яланах ачасемшĕн ĕçленĕ, вĕсен интересĕшĕн тăрăшнă. Çавăнпа та эпĕ халĕ те пĕлӳ шайне ӳстеретĕп, вебинарсене, вĕренӳ курсĕсене хутшăнатăп, хам тĕллĕн те чылай вĕренетĕп.

«Ку пирĕн Елена Юрьевна» тенине илтме мана яланах кăмăллă. Эпĕ яланах сирĕншĕн тата сирĕн ачасемшĕн ĕçлетĕп.

– Тавах сире, Елена Юрьевна, кăсăклă калаçушăн. Ĕçре ăнăçу пултăр сире.

# Ăста композитор

Аверий Токарев Кашмаш ялĕнче 105 çул каялла çуралнă. Вăл – искусство ĕçченĕ, чăваш юрă-кĕвĕçи, ăста композитор, пултаруллă педагог тата наставник. 1947 çултанпа СССР композиторĕсен пĕрлĕхĕн пайташĕ.

Аверий Токарев «Сарпике» балет, пилĕк симфони, виçĕ сюита, икĕ увертюра, «Симфони ташшисем», «Сармантей» симфони юмахĕ, «Тури Вылта туй сикет» хайлавсен авторĕ, çавăн пекех виолончель, кларнет, труба, фортепиано тата ытти музыка инструменчĕ валли юрă-кĕвĕ чылай çырнă. Унăн произведенийĕсем чылай тата тĕрлĕрен.

Аверий Токарев ачаллах юрă-кĕвĕне лайăх ăнланнă, çавăнпа та ку енĕпе унăн туртăмĕ пысăк пулнă, балалайкăпа, кĕслепе выляnă. 7 класлă пĕлӳ илнĕ хыççăн пĕр вăхăт колхозра ĕçленĕ. Малалла вĕренес шухăш пуçран тухман, 1935 çулта чăваш музыка училищине вĕренме кĕнĕ. Пултарулăха кура студент вăхăтĕнчех чăваш симфони оркестрне хутшăннă. Вăрçă пуçланнă çулхине вăл С. Борисов ячĕллĕ чăваш музыка техникумĕнче контрабасс енĕпе пĕлӳ илнĕ. Тепĕр çулхине вара ăна алла çар ретне тăма повестка панă, служба тапхăрне духовой оркестр ертӳçинче ирттернĕ.

1946 çулта Аверий Токарев Мускавра Хĕрлĕ çарăн çар капельмейстерĕсен аслă училищинчен вĕренсе тухнă. Халĕ ăна эпир çар институчĕ тенипе пĕлетпĕр. 1945 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче вăл Мускаври Хĕрлĕ площадьре Çĕнтерӳ парадĕнче музыкант шайĕнче хутшăннă. Çав çулхинех пирĕн ентеш Шупашкара таврăннă та чăваш симфони оркестрĕнче музыкант-контрабасист должноçĕнче ĕçлеме пуçланă. 1952 – 57 çулсенче ăна СССР музыка фончĕн Чăваш АССР-ĕнчи уполномоченнăйĕ пулма шаннă. 1959 – 67 çулсенче вăл Чăваш музыка театрĕн оркестрĕн артистĕнче тăрăшнă.

Педагог пулса Аверий Токарев 1946 – 67 çулсенче Шупашкарти музыка училищинче ĕçленĕ. Хыççăн С. Максимов ячĕллĕ ача-пăча музыка училищинче, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче тăрăшнă. 1978 çулта вара пенси çине тухнă. 1997 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче Аверий Токарев пурнăçран уйрăлнă.

Ĕçне кура – хисепĕ. Аверий Токарева музыка искусствинчи тăрăшулăхшăн 1962 çулта Чăваш АССР искусство тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятпа, 1980 çулта РСФСР искусство тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятпа чысланă. Çавăн пекех унăн тĕрлĕ шайри Хисеп грамотипе Тав çырăвĕ чылай, ăна тăватă медальпе чысланă.

**Кăларăма Роза МАКАРОВА хатĕрленĕ.**

**«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ» проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**

Аграри пĕлĕвĕн кунĕ

# Тăрăшсан çырла та тупăш парать



Килти хушма хуçалăха аталантарассипе хăй тĕллĕн ĕçлекен (самозанятый) тесе регистрациленсе Чăваш Республикин Ял хуçалăх тата Ĕçпе социаллă хӳтлĕх министерствисенчен пулăшу илнисем районта сахал мар. Вĕсем кашниех пурнăçри йывăрлăхсене хăйсен вăйĕпе, тăрăшулăхĕпе çĕнме тăрăшаççĕ. Çакна валли республика бюджетĕнчен илнĕ субсидин пĕтĕмĕшле сумми те вуншар миллион тенкĕпе танлашать. Çапла вара ял çынни валли уйăракан патшалăх пулăшăвĕ хăй тĕллĕн ĕçлекенсем пурнăçри йывăрлăхсем умĕнче пĕчĕн пулманнине çирĕплетет.

Çу уйăхĕн 16-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр ял библиотекинче муниципалитет округĕн «Сила села – Ял хăвачĕ» проектне пурнăçа кĕртессипе аграри пĕлĕвĕн кунĕ иртрĕ. Калаçу вырăнта çырла ӳстерессин рентабельлĕхĕ пирки пулчĕ. Ăна йĕркелекенсен йышĕнче Чăваш Республикин Наци библиотеки, республикăри ял хуçалăх министерстви, муниципалитет округ администрацийĕн ял хуçалăхпе экологи пайĕ, муниципалитет округĕн тĕп библиотека системи пулни умри калаçу пысăк пĕлтерĕшлĕ пуласса систерчĕ. Кун йĕркинчи ыйтусене пăхса тухнă чухне вăл туллин курăнчĕ.

Çырла лартса ӳстерессине тишкерессипе ирттернĕ тĕл пулăва муниципалитет округ администрацийĕн ял хуçалăхпе экологи пайĕн пуçлăхĕ Татьяна Павлова уçса ертсе пычĕ. Вăл малтанах нумай çул ӳсекен çырласен плантацийĕсен республикăри тата округри лаптăкĕсемпе, вĕсем çинче ĕçлекенсемпе тата пĕрлехи аталану утăмĕсемпе паллаштарчĕ.

2023 çул пуçланнă тĕле республикăра нумай çул ӳсекен çырла культурисем пĕтĕмпе 1079,4 гектар пулнă. Ку ĕç ытларах Муркаш, Шупашкар, Патăрьел муниципалитет округĕсенче сарăлнă. Асăннă лаптăкăн 57 проценчĕ (615,6 гектарĕ) ял çыннисен килти хушма хуçалăхĕсенче вырнаçни ял çынни çырла тутине пĕлни пирки калать.

Республикăри ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче те çырла культурисем паянхи куна пĕтĕмпе 463,8 гектар йышăнаççĕ. Ку вăл 2021 çулхи кăтартуран 97,7 гектар нумайрах. Муркаш муниципалитет округĕнче паян тĕрлĕ сортлă çырла пурĕ 202 гектар çинче (республикăн 44 проценчĕ) туса илеççĕ. Тĕл пулăва пухăннисем юлашки çулсенче хăйсем ку ĕç çине ытларах тимлĕх уйăрнине патшалăх пулăшăвĕпе çыхăнтарнине палăртрĕç.

Республикăра 2021 çултанпа ял хуçалăх производствин перспективăллă енĕсене аталантарма грант пулăшăвĕ çирĕплетни те («Фермер шкулĕ» проект шайĕнче «Çырла лартса ӳстерессин» ен упранса юлнă) ял çыннисен хапăл тăвакан çĕнĕлĕхшĕн курăмлă пулăшу пулнă.

Федераци тата республика шайĕнчен паракан пулăшупа усă курса пирĕн округри 3 фермер 2019 – 2020 çулсенче патшалăх пулăшăвне 5,6 млн тенкĕлĕх тивĕçнĕ. Тепĕр çулне вара ку пулăшăва 20 фермера 81,9 млн тенкĕлĕх уйăрса панă. 2019 – 2022 çулсенче пирĕн округри 8 фермер çырла туса илессипе ĕçлеме пĕтĕмпе 29 млн тенкĕ гранта тивĕçнĕ. Çырла туса илессипе ĕçлеме грант пулăшăвĕ парассипе республикăра кăçал валли те сыхласа хăварнă.

2022 çулта пахчари çĕр çырлине туса илме республика шайĕнчи çĕнĕ пулăшу ĕçлеме пуçланă – патшалăх тăкакăн 80 процентне саплаштарать. Çак пулăшупа усă курса республикăри пуçаруллă çынсем 24,5 млн тенкĕ субсидие тивĕçнĕ. Вăл суммăран 18 млн тенкĕ ытла пирĕн округри фермерсем илме пултарнă.

Тĕл пулура Чăваш Республикинчи «Агро-Инноваци» хысна унитарлă предприятин информаципе аналитика пайĕн пуçлăхĕ Андрей Петров ял çыннисене хăйсене тĕллĕн ĕçпе тивĕçтересси çинче тĕплĕ чарăнса тăчĕ. Андрей Валерьевич республикăра вăй илсе пыракан çĕнĕлĕхĕн ырă енĕсем çинчен каласа пачĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл муркашсем те çĕнĕлĕхсенчен юлманнине палăртрĕ. Ырă пуçарусем муниципалитет округĕнче çырла лартса ӳстерессипе те пуррине уйрăм тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ. Хăй тĕллĕн ĕçлес текенсем валли кăларнă кĕнекепе паллаштарчĕ.

– Паян пирĕн хушăмăрта хăй тĕллĕн ĕçлекен граждансем йышланса çеç пыраççĕ. Килти хушма хуçалăх тытакан хăй тĕллĕн ĕçлекен тесе официаллă регистрациленни субсиди илмелли тĕп услови пулса тăрать. Асра тытма, унăн хăйĕн хуçалăхĕнче «Профессиллĕ тупăшран налук тӳлесси» ятарлă налук йĕркипе ĕçлесе пымалла. Ĕçе хушма çынсене явăçтармасăр çулталăкри тупăш унăн 2,4 млн тенкĕчченех пулмалла. Патшалăх пулăшăвĕпе хăй тĕллĕн ĕçлекенсене çирĕплетнĕ йĕркепе муниципалитет округĕсен администрацийĕсем урлă тивĕçтереççĕ. Субсиди илме хăй тĕллĕн ĕçлекенĕн хăйĕн заявленийĕпе пымалла. Республикăра килти хушма хуçалăх 200 пин ытла шутланать. Вĕсене патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтерсе малалла аталантарас тесе килти хушма хуçалăх тытакансене хăй тĕллĕн ĕçлекенсен çулĕ çине тăратмалла, – терĕ Андрей Валерьевич тĕл пулăва пухăннисен ыйтăвĕсем çине хуравланă май.

Тĕл пулу ĕçне депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн председателĕ Александр Иванов хутшăнчĕ. Çырла ӳстерессипе ĕçлекен индивидуаллă предприниматель пулнă май пухăннисене хăй çак ĕçе епле кӳлĕннипе, ĕçри тĕп ыйтусемпе паллаштарчĕ, пухăннисен ыйтăвĕсене хуравларĕ. «Ĕçе пуçăнма малтанах çирĕп тĕллев кирлĕ. Ăна пурнăçа кĕртнĕ çĕрте çĕр пахалăхĕ те, çырла сорчĕ те, çичĕ хут тар кăларса ĕçлени те малти вырăна тухаççĕ. Çапла пуçланать вăл çырла бизнесĕ», – терĕ ĕçлĕ калаçура Александр Валерьевич хăйĕн харпăрлăхĕнче 13 гектар çĕр çырли ӳстернине палăртса.

– Çырла лартса ӳстерсе укçа тума пулать. Çакна эпĕ хам ĕç опычĕнчен куратăп. Ума лартнă тĕллеве пурнăçа «Фермер шкулĕнче» çырла лартса ӳстерессипе пĕлӳ пухнинчен пуçăнтăм. Пысăк ĕçе пĕчĕк анаран тытăнмалла – çапла турăм та. Халĕ хамăн пуçарăва чарса лартма тĕллев çук, – терĕ çырла ӳстерес ĕçри вăрттăнлăхсем çинчен сăмах хускатсан Евгений Плечов индивидуаллă предпринимател.

Килти хушма хуçалăх тытакансене хăй тĕллĕн ĕçлекенсем шутне кĕртни – питĕ перспективăллă пулни çинче «Россельхозбанкăн» Чăваш Республикинчи филиалĕн пай пуçлăхĕ Неля Дмитриевăпа Чăваш патшалăх аграри университечĕн доценчĕ Наталия Фадеева чарăнса тăчĕç.

Усă калаçу икĕ еншĕн те усăллă пулнине тĕл пулăва пынисем те, ăна йĕркелекенсем те пытармарĕç.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Асăрхаттару

# Транспорт газон çинче?

Çуллахи вăхăтра автотранспорта газон çинче е йывăç-тĕм ӳсекен вырăнта, спорт е ача-пăча площадкинче лартса хăварнине курма пулать.

Чăваш Республикин 2003 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнчи 22 номерлĕ «Чăваш Республикинче административлă право нормисене пăсни çинчен» саккунĕнче шăпах çак йĕрке пирки çырса панă. Унта палăртнă тăрăх, хăйсен транспорт хатĕрне ял-хулари курăк ӳсекен территорисенче, ача-пăча тата спорт площадкисенче, чĕр чунсене уçăлтарса çӳретмелли площадкăра лартса хăварнăшăн административлă явап пăхса хунă. Ун пирки саккунри 10.8 статйинче çырса панă.

Граждансене çак йĕркене пăснăшăн асăрхаттарма 1 пин тенкĕрен пуçласа 2 пин тенкĕ таран штраф пама пултараççĕ. Çулталăк хушшинче ку йĕркене тепре пăссан 2 – 5 пин тенкĕ таран штраф парассине пăхса хунă.

Çавăнпа та Муркаш муниципалитет округ администрацийĕ çумĕнчи административлă комисси муниципалитетра пурăнакансене йĕркене пăсмалла марри çинчен асăрхаттарать.

**Административлă комисси.**

Спорт

# Бронза çĕнсе илнĕ

Майăн 7 – 13-мĕшĕсенче Самара хулинче бокс енĕпе Атăлçи федераци округĕн ăмăртăвĕ иртнĕ. Унта Раççейĕн çак округри 14 регионĕнчи 201 боксер хутшăннă, вăл шутра – Чăваш Республикинчи 8 боксер та.

Муркашри «Сывлăх» спорт шкулĕн воспитанникĕ Серафим Хораськин Чăваш Ен пĕрлештернĕ командин йышĕнче республика чысне хӳтĕлеме тивĕçнĕ. Николай Багдасарян тренер пĕлтернĕ тăрăх, Серафимăн çурма финала тухиччен йывăр кĕрешӳсем ирттерме тивнĕ. Апла пулин те Муркаш боксерĕ Оренбургри тата Саратоври боксерсене çĕнтерсе финала тухнă.

Хăйĕн виçе категорийĕнче Серафим Хораськин Атăлçи федераци округĕн ăмăртăвĕн бронза призерĕ пулса тăнă.

**Хамăр инф.**